Юман А. Вилĕмсĕр поэтăмăра чысласа / Анатолий Юман // Ялав. – 1981. - № 10. – С. 12.

# ВИЛĔМСĔР ПОЭТĂМĂРА ЧЫСЛАСА

Ульяновскри Сĕве хĕрринчи урамри 152-мĕш çурт. Икĕ хутлă, хĕрлĕ кирпĕчрен купаланăскер. Çак çуртăн вăхăт тусанĕпе тĕксĕмлене пуçланă чулĕсем ай-хай нумай астăваççĕ. Çав чулсене улăп-этем Иван Яковлевич Яковлев та, чăваш шăпчăкĕ Константин Иванов та курнă...

Хĕрӳ пурнăç вĕресе тăнă çав çăра тирексем айĕнчи шăплăхра ларакан çуртсенчен пĕринче. Ахальтен мар мĕнпур чăвашсен чунĕ Чĕмпĕрелле туртăннă ун чух. Çакнашкал лару-тăрура кăна çутăлса кайма пултарнă та К. В. Иванов таланчĕ.

Сĕве хĕрринчи кивĕ çурт çинче чугун хăма: «Кунта 1877 çултан пуçласа 1956 çулччен И. Я. Яковлев уçнă учительсен шкулĕ (педагогика училищи) вырнаçнă. Шкула В. И. Ульянов (Ленин) тата И. Н. Ульянов пырса çӳренĕ». Унпа юнашарах — тепĕр çĕнĕ хăма. Ăна халлĕхе шурă пуставпа хупласа хунă-ха...

Июнь уйăхĕ. Вĕренекенсем канура. Çавăнпа килкартинче яланхи пек шавлă мар. Константин Иванова чысласа Асăну хăми уçăласси çинчен илтсен вара халăх самаях пухăннă. Вĕсем хушшинче эпир Чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă ветерансене те куратпăр. Акă Каша чăвашĕ Владимир Матвеевич Репин. Халĕ вал Ульяновскри вăтам шкулсенчен пĕринче директорта ĕçлет. Анат Тимĕрçенти Еçпе Çар мухтавĕн музейĕн директорĕ, Тăван çĕршыв Аслă варçин ветеранĕ Иван Васильевич Дубов... Вĕсемех мана 86 çулхи Наталья Павловна Теняевăпа паллаштарчĕç. Тутар АССРĕнчи Аслă Аксу ялĕнче çуралса ӳснĕ вăл.

— Пирĕн ялта учительница пурччĕ — Прасковья Никитична Никитина, И. Я. Яковлев вĕренекенĕ пулнăскер, — аса илет Н. П. Теняева. — Ялти шкултан вĕренсе тухсан вăл мана Чĕмпĕре кайма хистерĕ те. Хăй леççе ячĕ. Экзамен парса пĕтериччен кĕтсех тăчĕ. Пире И. Я. Яковлев хăй те, К. В. Иванов та вĕрентетчĕ. Питĕ килĕшӳллĕ каччăччĕ поэтăмăр. Ялан тирпейлĕ тумланса çӳретчĕ. Сăпайччĕ. Почерк лайăхчĕ манăн. Пĕррехинче лайăх çыракан виçĕ хĕрачана суйласа илчĕ те: «Эсир переписчицăсем пулатăр», — терĕ. Пушă вăхăтра алçырăвĕсем çырса хатĕрлеме пуçларăмăр...

Чаплă самант çитет. Облаçри культура управленийĕн начальникĕ Сергей Салтыков чăваш поэзийĕн классикне халалласа пухăннă митинг уçални çинчен пĕлтерет. Вăл партин Ульяновск хула комитечĕн секретарьне В. А. Порунова самах парать. «Поэт витĕмĕ паян кун та пире халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетме пулăшать»,—тет вăл, сăмахне вĕçлесе.

Константин Ивановăн хăй евĕр пултарулăхĕ тата вăл чăваш литературинче ĕмĕрлĕхе хăварнă чĕрĕ витĕм çинчен Ульяновскри писательсен организацийĕн ответлă секретарĕ Николай Благов поэт каларĕ.

— Çӳл тӳпери тăри юрри хресчене ирхине-ирех ĕçе вăратнă пек, поэт сасси синкерлĕ саманара хăй халăхне çутă пурнăç патне чĕнсе янрана, — терĕ вырăс поэчĕ Константин Ивановăн халăх асне яланлăхах кĕрсе юлнă хайлавĕсене аса илтерсе.

Чăвашсен ятĕнчен вилĕмсĕр «Нарспи» авторне саламлама мана чыс тиврĕ.

Юлашкинчен КПСС хула комитечĕн секретарĕ В. А. Порунов Асăну хăми патне пырса шурă пустава сирет. Хăма çинчи сăмахсене пурте пăл хапуллăн вулаççĕ. «Кунта 1903—1914 çулсенче чăваш литературин классикĕ К. В. Иванов вĕреннĕ тата вĕрентнĕ», — тесе çырнă унта...

Тутар та, вырăс та, пăлхар та —
Паян сана тĕнче пĕлет.
Ĕмрӳ пулайрĕ вăрăм мар та,
Яту сан вилĕмсĕр, поэт!

Анатолий ЮМАН.